## ЧĂВАШ

Эп ватă çав тери! Истори шурăмпуçĕ
Кăвакарайнăччĕ — вăрантăм ыйхăран.
Кунçул ани çине уттартăм янкăр-уçă
Пуш пĕлĕт айĕпе малтисемпе пĕр тан.

Тĕрен тивмен çĕре ман йывăç акапуçăм
Хуратрĕ çĕклесе пайтах асаппалан.
Кăкланчĕ ерипен пиншер çулхи кăлкан:
Кайран акакана — ĕç çăмăл кутăруçăн.

Ăçта çитмерĕм-ши? Асра яланлăх пур
Вут пек хĕртен хирсем,
нихçан кайми кĕрт-юр,
Лĕп тинĕссен тĕпне анса мерчен кăлартăм...

Телейшĕн хушăнап мулпа илем çинче.
Этемлĕх çӳпçинче — пĕлсе тăтăр тĕнче!—
Пурин тенкипелен пĕр хак çӳрет нухратăм.

1939



## ЧУВАШ

Я очень, очень стар! Истории заря
Едва лишь занялась — я вспрянул ото сна;
Под небом голубым — без бога, без царя —
На поле зашагал: меня звала весна.

Над залежью веков, усердием горя,
Сгибался долго я. Взрыхлилась целина.
К пришельцу позднему была добрей она:
Мой деревянный плуг прошелся там не зря.

Где путь мой не пролег? Запомнил я навек
Палящий зной пустынь и вечный горный снег.
Рычанье львов в ночи,
кораллы в теплом море.

Пусть твердо знает мир: с природой
В вечном споре
Я создал, как и все, богатство, красоту;
Творцом всеобщих благ себя по праву чту.